28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАРТ
28
ЮНКУН
59(1810) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, паян, мартăн 27-мĕшĕнче, Силези территорийĕнче ШТРЕЛЕН тата РЫБНИК хулисене—çул-йĕрсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене — туртса илнĕ.

ШТРЕЛЕН тата РЫБНИК хулисене туртса илесшĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ЖАДОВ генерал-полковникăн, КУРОЧКИН генерал-полковникăн, ИЛЬИНЫХ генерал-майорăн, РОДИМЦЕВ генерал-лейтенантăн, БАКЛАНОВ генерал-майорăн, ГОНЧАРОВ генерал-майорăн, ЛЯМИН генерал-майорăн, КРАСАВИН генерал-майорăн, ЗАМАНОВ полковникăн, ГАРАН полковникăн, ОЛЕЙНИКОВ генерал-майорăн, РУСАКОВ генерал-майорăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВАН, ПУШКАРЕВ полковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВАН, артиллери генерал-майорĕн САНЬКОН, БАЗЫЛЕНКО полковникăн, ВЯЛОВ полковникăн, ГОЛЬДИН подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВАН, ДОНЧЕНКО подполковникăн летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан асăрхаса палăртса хăварас тесе, ШТРЕЛЕН тата РЫБНИК хулисене туртса илесшĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 27-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ШТРЕЛЕН тата РЫБНИК хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ШТРЕЛЕН тата РЫБНИК хулисене туртса илесшĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи мартăн 27-мĕшĕ. № 312.

Вăрман хатĕрлес ĕçе вăйсăрлатмалла мар

Вăрман хатĕрлекен организацисенчен пирĕн çĕршыв халĕ йывăç нихăçанхинчен ытларах ыйтать. Нимĕç пусмăрçисенчен ирĕке кăларнă халăх хуçалăхне ура çине тăратма йывăç материалĕсем нумай кирлĕ.

Çавăнпа та вăрман хатĕрлевĕ—оборонăллă пысăк ĕç. Пирĕн республикăри вăрман работникĕсемпе çак ĕçе мобилизациленĕ колхозниксем чылайĕшĕ хăйсен çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхне туйса ĕçлеççĕ. Вĕсем халăх хуçалăхне кирлĕ йывăçпа ытти материалсене вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрлесе парассишĕн кĕрешеççĕ.

Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана Куславкка, Чурачăк, Шупашкар, Шăхасан тата Первомайски, Елчĕк, Советски районсем касас тата турттарас енĕпе те иртерсе тултарчĕç. Чкаловски, Калинино, Комсомольски, Тăвай, Красноармейски тата Муркаш районĕсем те çак пысăк ĕçе вĕçлесе пыраççĕ.

Асăннă районсем çав çитĕнĕве фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăха кирлĕ пек хутшăнса турĕç. Вăрманта ĕçлеме тивĕçлĕ ĕç вăйне—çынсемпе лашасене—графикпа палăртнă чухлех уйăрса пачĕç, вĕсене кирлĕ апат-çимĕçпе фуража пĕр чăрмавсăр леçсе тăчĕç, вăрман турттаракансемпе касакансем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç, ăмăрту мĕнле пынине ятарласа янă уполномоченнăйсем урлă вĕçĕмех тĕрĕслесе пычĕç.

Лайăх ĕçлекен районсем. Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа панă приказа ответлесе, сезонри хăйсен планĕсене тултарнă хыççăн та вăрманта ĕçлеме пăрахмарĕç, вĕсем халĕ иккĕмĕш кварталшăн вутă хатĕрлеççĕ. Сăмахран, Куславкка районĕ иккĕмĕш квартал шучĕпе темиçе пин кубометр вутă хатĕрлесе турттарнă.

Вăрман хатĕрлекен предприятисенчен Кирс, Йĕпреç, Вăрнар тата Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем çак сезонри вăрман ĕçĕсен планне мартăн 15-мĕшĕ тĕлнех иртерсе тултарнă.

Анчах та вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе панă пĕтĕм плана малта пыракан районсемпе вăрман хуçалăхĕсем лайăх ĕçленипе кăна тултарма çук. Республикăра, пĕтĕмĕшпе илсен, вăрман хатĕрлевĕ кирлĕ пек пулса пымасть.

Курăнать ĕнтĕ, пирĕн республика вăрман хатĕрлевĕн сезонри планне турттарас енĕпе тултарасси хăрушлăх умĕнче тăрать. Мĕншĕн тесен çуркунне çывхарса килет. Вăрман хатĕрлевĕн чи лайăх тапхăрĕ вĕçленсе пырать. Çак юлнă срокра республикăн плана тултарас пулсан, татах 150 пин кубометр йывăç турттарса кăлармалла.

Плана срокра тултарас тесен, районсемпе вăрман хатĕрлекен организацисен мĕн тумалла-ха? «Правда» хаçат кăтартса панă виçĕ условие пурнăçлани кирлĕ: «пĕрремĕшĕнчен,—трестсем, колхозсем тата единоличниксем тытакан лашасене вăрман турттарнă çĕре май пур таран йышлăнрах хутшăнтармалла; иккĕмĕшĕнчен, — рельссем хывса тунă çулсене, трактор, автомобиль çулĕсене пĕр чăрмавсăр ĕçлеттермелле, виççĕмĕшĕнчен.—вăрман хуçалăхĕнче пур пек тракторсемпе, паровозсемпе, мотовозсемпе тата автомашинăсемпе туллин усă курмалла».

Анчах та пирĕн республикăри вăрман хатĕрлевĕнче юлса пыракан районсемпе предприятисем çак условисене начар пурнăçлаççĕ. Вăрмар районĕ вăрман хатĕрлевĕн сезонри хăйĕн планне касас енĕпе 81.9 процент, тултарас енĕпе 71.4 процент çеç тултарнă. Çапах та районри вăрман хатĕрлевне ĕçпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ парса тăмасть. Юлнă срокра плана пĕтĕмпех тултарас пулсан, çак районран çуррăн 250 çын, лашапа 500 çын ĕçлемелле. Анчах та мартăн 17-мĕшĕнче кунтан çуран 148 çын, лашапа 112 çын кăна ĕçленĕ, тепĕр икĕ кунран вĕсен хисепĕ икшер хут чакнă. Шăмăршă районĕнчен те вăрман хатĕрлевĕнче графикпа палăртнă туртăм вăйĕн чĕрек пайĕ анчах ĕçлет.

Туртăм вăйĕ сахал парса тăнă пиркех Кувакино, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Йĕпреç, Октябрьски тата ытти районсем те вăрман турттарас ĕçе вăраха ярса пыраççĕ. Вĕсем турттармалли плана 45 процентран пуçласа 60 процента çити çеç тултарнă.

Çакна асра тытмалла: вăрман хатĕрлесси—çур ĕç, хатĕрленĕ вутта чугун çулсемпе шыв çулĕсем патне турттарса тухас пулать. Вăрман хатĕрлекен предприятисемпе районсен ĕçне халĕ йывăççене касса тăннипе кăна мар, ăсатакан пунктсем патне турттарса тухнипе ытларах хаклаççĕ.

Вăрман хатĕрлекен организацисен задачи—колхозсенчен пынă ĕç вăйне вăрманта йышăнса илесси кăна мар, вĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухасси, ĕçлеме юрăхлă условисем туса парасси, ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ÿстерсе пырасси пулать. Вăрманта ĕçлекенсен халĕ ĕç вăхăчĕпе туллин усă курмалла: ирхи çутăпа пуçласа сĕм тĕттĕмччен ĕçлемелле, ĕç тухăçлăхне 2—3 хут ÿстермелле.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен унсăр пуçне хăйсен алăнчи майсемпе, механизациленĕ тата рационализациленĕ çулсемпе анлăн усă курмалла. Анчах та хăшпĕр предприятисен руководителĕсем çак енĕпе хăйсен ĕçне начар йĕркеленĕ. Сăмахран, Йĕпреç вăрманпромхозĕ (директорĕ Федоров юлташ) пĕрремĕш кварталта хăйĕн обозĕпе вăрман турттармалли плана çурри ытларах çеç тултарнă, Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕн рационализациленĕ çулĕ вара ĕçлеменпе пĕрех.

Вăрман хатĕрлевĕн хĕрÿ тапхăрĕ вĕçленет тесе, вăрманта ĕçлекен рабочисемпе колхозниксем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе сÿрĕклетмелле мар, юлнă кĕске срокра плана кашни предприяти, кашни район, колхоз тăрăх тултарас тĕллевпе татах та вăйлатмалла. Ĕç дисциплинине çирĕплетмелле: колхоз заданине пĕтĕмĕшпе тултармасăр, пĕр колхозник те киле таврăнма тивĕçлĕ мар.

Çĕршыва вăрман продукцийĕ парса тăрасси—государствăн питех те пысăк ĕçĕ. Çак ĕçĕн планне срокра тата пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн, вăрман хатĕрлекен организацисемпе пĕрлех, партипе совет органĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Республикăри партипе совет организацисен, вăрман промышленность руководителĕсен, леспромхоз директорĕсен, çак ĕçри мĕнпур рабочисемпе колхозниксен вăрман хатĕрлевĕн сезонри планне срокра, пĕтĕмпех тултарас тĕлĕшпе мĕн тума пултарнине пурне те тумалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 26-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем тăшман çарĕсен КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнере хри ФРИШ ГАФ заливĕ хĕрринчи ушкăнне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, ГРОСС ХОППЕНБРУХ, РАЙНШЕНХОФ, ДОЙЧ БАНАУ ялĕсене тата РОЗЕНБЕРГ портне туртса илнĕ, аркатса тăкнă тăшман чаçĕсен юлашкийĕсене КАЛЬХАЛЬЦЕР-ХАКЕН сăмсахĕ районне хăваласа янă. Малтанхи даннăйсем тăрăх, мартăн 26-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем ку районра 21.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, ПРАУСТЕР-ПФАРРДОРФ, ГРОСС ЛЯНД, АЛЬБРЕХТ, ПФАРДОРФ, МАТЦКАУ, ШЕНФЕЛЬД, ЦАНКЕНЦИН, ШЮДДЕЛЬКАУ, ВОННЕБЕРГ, ХЕЛЛЕ (ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хулинчен 2 километр хĕвеланăçнерехре), НЕНКАУ, МИГГАУ, ПЕЛОНКЕН, КЕНИГСХОФ, ВАЙСХОФ, РОТХОФ ялĕсене туртса илнĕ. Мартăн 25-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче ку районра 1.300 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, Карпат тăвĕсен тăрăхĕнчи сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче наступлени туса пырса, Чехословакири БАНСКА БИСТРИЦА хулине—çулсен паха узелне тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне — туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ГОРНЯ ЛЕГОТА, ЯСЕНЕ, РАЗЛОКА, ПОДКОНИЦЕ, ПЛЕХОД, СЕЛЦЕ, САСОВО, СКУБИН, МАЛАХОВ, РАКИТОВЦЕ, ПУРОВА, БУДЧА ятлă пысăк ялсем тата ВЛКАНОВА, РАЗВАЛЬНЬ, СЛОВАЦКА ЛЮПЧА, ЛУЧАТИН, ЗАМОСТЕ, ПОДБРЕЗОВА чугун çул станцийĕсем. Мартăн 25-мĕшĕнче фронт çарĕсем тăшманăн 1.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, мартăн 26-мĕшĕнче Папа хулипе Девечер хулине— çулсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене, Австри чиккисем патнелле пымалли çулсене хÿтĕлекенскерсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—БАКОНЬПОТЕРД, ЛОВАСПАТОВА, ВАНЬОЛА, КУП, НОСЛОП, ДОБА, ФОЛЛОВЕЧЕ, ШОМЛОВАШАРХЕЛЬ, ПАДРАГ, НАДЬВАЖОНЬ, ВАСОЛЬ, БАЛАТОНУДВАРИ, ОРВЕНЬЕШ, ОСЕФО, ТИГАНЬ ятлă пысăк ялсем тата ЛАЗИ, РОМАНД, БАКОНЬ-ТАМАШИ, ПАПАТЕСЕР, НАЛЬДИМОТ, АЙКА чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çÿренĕ.

Мартăн 25-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 180 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) ХУЛИНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 26-мĕшĕ ыран пенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Гданьск (Данциг) хулинчи вăрçă объекчĕсене йышлăн вĕçсе пырса çапнă. Бомбăсем пăрахнипе пула, Гданьск (Данциг) чугун çул узелĕнче тата портĕнче вăйлă пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Нефтехранилищĕсем, чугун çул составĕсем тата тăшманăн портри транспорчĕсем çуннă.

Мартăн 26-мĕшĕнче кăнтăрла та пирĕн бомбардировщиксем Гданьск хулипе портне çаплах пыра-пыра çапнă.

☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем Фриш Гаф заливĕ хĕррине хĕстерсе лартнă тăшман çарĕсен ушкăнне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Совет чаçĕсем Банау шывĕ урлă каçнă та, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, тĕреклетнĕ пункт пулса тăракан Дойч Банау ялне туртса илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Розенберг портне туртса илнĕ, нимĕçсене шурлăхлă пĕр пĕчĕк сăмсах çине хăваласа кĕртсе янă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен виллисем купаланса выртаççĕ. Тăшман ним йĕркисĕр паллисĕр каялла чакать, хăйĕн хĕçпăшалĕпе çар япалисене темĕн чухлĕ пăраха-пăраха хăварать. Пирĕн çарсем танксемпе бронетранспортерсем нумай тытса илнĕ, темиçе çĕр хир туппи, темиçе пин автомашина, 53 паровоз, 1.380 чугун çул вагонĕ, боеприпаспа снаряженин 67 складне тытса илнĕ.

Мартăн 26-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче малтанлăха палăртнă тăрăх, фронт çарĕсем 21.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Аркатса тăкнă тăшман чаçĕсенчи салтаксемпе офицерсем, хирĕç тăма пăрахса, алăри хĕçпăшала çĕре пăрахаççĕ. Тыткăна илнисен хисепĕ пĕрмаях ÿссе пырать.

* * *

Гданьск (Данциг) хули енче пирĕн çарсем, хĕвеланăç енчен наступление вăйлатса пырса, тăшман оборонин иккĕмĕш линине татнă. Халĕ çапăçусем виççĕмĕш линире Гданьски умĕнчи юлашки укрепленисен тăрăхĕнче пыраççĕ. Хăватлăн пырса çапса, совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем тĕреклетнĕ пункт пулса тăракан Хелле ялне туртса илнĕ те Гданьск хулипе пĕрлешсе ларнă Эмаус ялĕн хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн ытти чаçсем, тăшманăн нумай вăхăтлăха тунă укрепленийĕсене çĕнтере-çĕнтере, Гданьск патне çурçĕр енчен çывхарса пыраççĕ. Пирĕн артиллери тăшман позицийĕсене вĕçĕмсĕр персе тăрать, авиаци те çав позицисене бомбăсем пăрахса штурмлать. Кун каçиччен нимĕçсен 35 танкĕпе бронетранспортерне, çавăн пекех тата 80 хир туппипе зенитнăй туппине ытла пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци Данциг бухтинче нимĕçсен 2 пăрахутне, 3 катерне тата 3 баржине шыва путарнă. Тăшманăн ытти суднисем çине те бомбăсем тÿрех пыра-пыра ÿкнĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем Карпат тăвĕсен тăрăхĕнче малалла наступлени туса пынă. Тусем çинче малтанах хатĕрлесе хунă оборона сооруженийĕсемпе усă курса, тăшман Грон шывĕн сулахай хĕрринче Зволен хулинчен çурçĕртерехри плацдарма хăй аллинчех тытса хăварма хăтланнă. Нимĕçсен ку участокра хирĕç тăрса çапăçмалли центрĕ Банска Бистрица хули пулнă. Ку хула Грон шывĕн икĕ айккипе ларса тухнă. Вăл çулсен паха узелĕ пулса тăрать. Пирĕн çарсем Банска Бистрица хулин хĕвелтухăç пайĕнчи хĕррине çитсе кĕнĕ те тăшманпа урамсенче çапăçма тытăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн ытти чаçсем, унччен çеç Грон шывĕн сылтăм хĕрринчи плацдарма туртса илнĕскерсем, хулана кăнтăр енчен хÿтĕлене тăракан Радвань ялне йышăннă. Хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем хушса панă тăшман пехоти темиçе хутчен те контратакăна кĕре-кĕре кайнă. Пирĕн боецсем нимĕçсене каялла хăваласа янă та, тăшмантан аякран иртсе кайса, Банска Бистрица урамĕсене вăркăнса кĕрса кайнă. Нимĕçсем хулари чул çуртсенче çирĕпленсе ларнă. Совет чаçĕсем, штурмлакан ушкăнсене пайланса çапăçса, тăшман хирĕç тăракан вырăнсене часах аркатса тăкнă та нимĕçсен Грон шывĕ çинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан Банска Бистрица хулине туртса илнĕ. Хĕçпăшал тата çар япалисем нумай тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление малалла вăйлатса пынă. Совет танкисчĕсемпе пехота çав тери хăвăрт пыра-пыра çапса, тăшмана хушăри позицисем çинчен ывăта-ывăта ярать, лайăх позицисем çинче чарăнса тăрса çирĕпленме май памасть. Аслă вăрманлă вырăна тăшмантан тасатнă хыççăн пирĕн çарсем Папа хулине туртса илессишĕн çапăçма тытăннă. Çулсен паха узелĕ тата вăйлă тĕреклетнĕ пункт, Австри чиккисем патнелле пымалли çулсене хÿтĕлекен пункт пулса тăракан Папа хулишĕн нимĕçсем хытă çапăçнă. Совет чаçĕсем тăшмантан аякран иртсе кайнă та хулари гарнизонăн каялла чакмалли çулĕсене пÿлсе лартнă. Çĕрле хула урамĕсенче хаярран çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем Папа хулине, Венгрин промышленноçлă центрне, Австрипе Венгри чиккинчен 50—60 километрта лараканскерне, туртса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем, ĕнер Варошлед хулине туртса илнĕскерсем, чугун çул тăрăх хĕвеланăç еннелле çав тери хăвăрт кайнă та нимĕçсене Девечер хулинчен хăваласа кăларнă. Балатон кÿллин çурçĕр-хĕвеланăç хĕррипе наступлени туса пыракан совет чаçĕсем Тигань çурутравне хÿтĕлекен тăшман подразделенийĕсен каялла чакмалли çулĕсене татнă та çав подразделенисене аркатса тăкнă. Кун каçиччен темиçе пин гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 45 танкне тата 43 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Совет воинĕсем нимĕç захватчикĕсемпе паттăррăн та хăюллăн çапăçаççĕ. Гварди красноармеецĕ Чеснов пĕр çапăçура 7 гитлеровеца вĕлернĕ те танксене пемелли туппа тытса илнĕ. Хăюллă боец çав туппа нимĕçсем çинелле çавăрса лартнă та унпа персе тăшманăн хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çунтарса янă. Гварди красноармеецĕ Гусакович аллă вĕççĕн çапăçнă чухне пĕр нимĕç офицерĕпе виçĕ салтака вĕлернĕ, унтан танксене пемелли граната вăркăнтарнă та тăшман бронетранспортерне çĕмĕрсе тăкнă. Осипов старши лейтенант командир пулса ертсе пыракан хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсен батарейи тăшман колоннине аркатса тăкнă, нимĕçсен пĕр танкне тата 8 автомашинине çунтарса янă. Унтан гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Гварди капитанĕ Василенко командир пулса ертсе пыракан батарея артиллерисчĕсем тăшман контратакине сирсе янă чухне нимĕçсен 3 танкне тата 3 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ.

СССР Совнаркомĕнчен, СССР Оборона Халăх Комиссариатĕнчен тата ВКП(б) Центральный Комитетĕнчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Оборона Халăх Комиссариачĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ мартăн 26-мĕшĕнче, нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн, Высши Çар Академийĕн Начальникĕ, большевиксен партийĕн шанчăклă ывăлĕ тата Хĕрлĕ Çарăн чи лайăх руководителĕсенчен пĕри—Совет Союзĕн Маршалĕ Б. М. ШАПОШНИКОВ вилнине çинчен хуйхăрса пĕлтереççĕ. Шапошников юлташ вилнипе государство Хĕрлĕ Çарăн чи вăтă та чи паллă полководецĕсенчен пĕрине çухатрĕ.

Совет Союзĕн Маршалне Б. М. ШАПОШНИКОВА Мускав хулинче пытараççĕ. Ăна государство шучĕпе пытарма йышăннă.

Совет Союзĕн Маршалĕ Б. М. Шапошников ятне ĕмĕрлĕхе упраса хăварас шутпа Мускавра ăна памятник лартаççĕ.



Б. М. Шапошников

Кăçалхи мартăн 26-мĕшĕнче, нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн, Хĕрлĕ Çарăн чи вăтă та чи чаплă полководецĕсенчен пĕри, Высши Çар Академийĕн Начальникĕ, ВКП(б) Центральный Комитет членĕн кандидачĕ, СССР Верховный Совет депутачĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Б. М. Шапошников вилсе кайрĕ.

Шапошников юлташ кивĕ Россия çарĕн руководителĕсенчен чи малтан куçнисемпе пĕрле Хĕрлĕ Çара куçнă, хăйĕн мĕнпур пĕлĕвне тата пысăк çар руководителĕн опытне Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене туса хурса вĕсене çирĕплетсе пырас ĕçе панă. Хĕрлĕ Çарта Шапошников юлташ ответлă вырăнсенче ĕçленĕ: тĕрлĕ çар округĕсенчи çарсен командующийĕ, Çар Академийĕн Начальникĕ, Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ, Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулса ĕçленĕ, юлашки вăхăтра вăл Высши Çар Академийĕн Начальникĕ пулнă.

Нумай çулсем хушши Хĕрлĕ Çарта тăрса, Шапошников юлташ Хĕрлĕ Çара лайăхлатас тĕлĕшпе, ун валли командирсем хатĕрлесе вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе, Хĕрлĕ Çара социализмлă Тăван çĕршыва хÿтĕлеме хатĕрлес тĕлĕшпе пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Хĕрлĕ Çар çав тери чаплăн çĕнтерсе пынинче Шапошниковăн пултарулăхĕпе нумай çул хушшинчи ĕçĕсен пайĕ пур.

Шапошников юлташ лайăх ĕçлесе пынăшăн Совет Правительстви ăна темиçе хут та орденсемпе наградăланă. Шапошников юлташа виçĕ хут Ленин орденĕ парса наградăланă, икĕ хут Хĕрлĕ Ялав орденĕ, 1-мĕш степень Суворов орденĕ тата икĕ хут Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă. Пирĕн партин шанчăклă ывăлĕ Шапошников юлташ хăй вилсе кайиччченех Ленин—Сталин партийĕн ĕçне чун-чĕререн парăнса, хамăр Тăван çĕршывăн патриочен тĕслĕхĕ пулса тăнă.

Шапошников юлташ ячĕ Совет халăхĕн чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.

Сталин, Жуков, Василевский, Ворошилов, Тимошенко, Буденный, Булганин, Щербаков, Антонов, Мерецков, Говоров, Баграмян, Рокоссовский, Конев, Петров, Еременко, Малиновский, Толбухин, Масленников, Тюленев, Пуркаев, М. П. Ковалев, Артемьев, Воронов, Хрулев, Яковлев, Федоренко, Новиков, Воробьев, Пересыпкин, Штеменко, Голиков, Смородинов, Мордвинов, Калинин, Чибисов, Филичкин, Давыдов, Пухов, Оливецкий, Петухов, Муравьев, Ковалев, Соколов-Соколенок.

Пĕлтерÿ

Совет Союзĕн Маршалне Б. М. Шапошникова пытарас ĕçе организацилеме комисси тунă. Комиссие çаксем кĕреççĕ. Ф. И. Голиков, А. Ф. Горкин, Г. М. Попов, В. Ç. Мордвинов.

ВЦСПС-ăн XIII-мĕш пленумĕ

Мартăн 26-мĕшĕнче Союзсен Çуртĕн Колоннăллă залĕнче ВЦСПС-ăн XIII-мĕш пленумĕ уçăлнă. Пленума уçнă чухне ВЦСПС Председателĕ В. В. Кузнецов юлташ çапла каланă: ВЦСПС-ăн XII-мĕш пленумĕ хыççăнхи çулталăк хушшинче пысăк событисем нумай пулса иртрĕç. Паттăр Хĕрлĕ Çар, Сталин юлташ ертсе пынипе, фашистла ирсĕрсене пирĕн таса çĕр çинчен хăваласа кăларчĕ, Германи çĕрĕ çине кĕрсе кайрĕ, халĕ нимĕçсен çĕрĕ çинче наступлени туса пырса, фашистсен йăви патне—Берлин хули патне çывхарнăçемĕн çывхарса пырать.

Çак çĕнтерÿсем вĕсем пĕтĕм совет халăхĕ тăрăшса ĕçленипе пулнă. Пирĕн паттăр рабочи класс, хăйĕн вăйне шеллемесĕр фронта мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăрса, çак çĕнтерÿсене ĕçлеме пулăшать.

Халĕ пирĕн умра рабочи класпа интеллигенцин нушисемшĕн тăрăшас задача тухса тăрать. Профсоюзсем хăйсен ĕçĕсене рабочисемпе интеллигенцин нушисене тĕп вырăна хурса туса пымалла.

Пленум çакăн пек кун йĕрки йышăннă:

1. Рабочисемпе служащисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатасси.

2. Рабочисемпе служащисем хушшинче профсоюзсен культурăллă-массăллă ĕçĕсене лайăхлатасси.

3. Лондонра пулса иртнĕ профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕн итогĕсем çинчен.

Кун йĕркин пĕрремĕш ыйтăвĕпе ВЦСПС секретарĕ Е. Я. Сидоренко юлташ доклад туса панă.

Доклад тăрăх прениссем пуçланнă.

(ТАСС).

Чăваш республики 25 çул тултарас умĕн

Чăлха фабрикинче ĕçлекенсен обязательствисем

Çак кунсенче Шупашкарти чăлха фабрикинче Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ Чăваш республики 25 çул тултарнине ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме чĕнсе каланине сӳтсе-явнă. Чăлха фабрикинче ĕçлекенсем комбинат коллективĕн паха пуçарăвне ырларĕç. Вĕсем, Чăваш Автономийĕ 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

1. Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле II-мĕш кварталти производство планне иртТерсе тултармалла. Вăл шутран: апрель уйăхĕнчи плана—105 процент, май уйăхĕнчине—110 процент тата июньрине—115 процент тултармалла.

2. Продукци пахалăхне лайăхлатмалла, 1-мĕш сортлă продукци туса кăларассине планпа пăхнинчен 2 процент ытларах ӳстермелле.

3. Ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстермелле.

4. Продукцин хăйне ларакан хакне 2 процент чакармалла.

5. Подсобнăй хуçалăхăн çĕр лаптăкне вăхăтра акса хăвармалла; пахча-çимĕçсене лайăх пăхса ӳстерсе пысăк тухăçлă çимĕçсем туса илмелле.

Кусемсĕр пуçне фабрика коллективĕ оборудованисене лайăх пăхса тата юсаса тăма, чĕртаварсене типтерлĕ тыткалама, электроэнергие перекетлеме, комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисене нумайлатма обязательство илнĕ; кашни рабочи, служащи, инженерпа техник социализмлă ăмăрту договорĕ тума пулнă.

Ӑмăртăва хутшăнаççĕ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри уйрăм цехсен коллективĕсем Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ. Трабский юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри рабочисем пурте нормăна тултарса ĕçлеме, çапла майпа апрель уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне 8 процент чухлĕ ӳстерме пулнă. Унсăр пуçне, çамрăксен икĕ бригадине çĕнĕрен организацилеме, ученикĕсенчен 25 рабочи вĕрентсе хатĕрлеме обязательство илнĕ.

Громов юлташ начальник пулса тăракан цехри Колесникова бригади, иртнĕ уйăхри социализмлă ăмăртура мала тухнăскер, чăваш халăхĕн уявне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илесшĕн. Бригада апрель, май тата июнь уйăхĕсенчи заданисене 280-шар процент тултарма обязательство илнĕ.

Механически цехри çамрăк токарь Суриков юлташ юбилей умĕнхи уйăхсенче нормăран икĕ хут тухăçлăрах ĕçлеме сăмах панă.

—◎—

КĂÇАЛХИ 3 КВАРТАЛШĂН СĔТ ПАРСА ТАТНĂ

ÇĔРПӲ. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, районри колхозсем государство умĕнчи парăмсене срокчен тӳлеççĕ. «Ĕмĕт» колхоз кăçалхи виçĕ кварталшăн сĕт парса татнă. Кăçал планпа унăн 7.087 литр сĕт памалла, ку тăранччен 5.050 литр панă та ĕнтĕ.

Кăшаркассинчи «Пионер» колхоз та çурçулшăн сĕт парса татнă.

ОБОРОНА ФОНДНЕ

ЧУРАЧАК. Шуркассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем, Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Тăван çĕршывăн оборона фондне 4.000 тенкĕ укçа пухса панă. 7-мĕш класра вĕренекен П. Иванов çав фонда 100 тенкĕ хывнă.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Вăрлăх хатĕрлес ĕç юлса пырать

СОВЕТСКОЕ. Малта пыракан колхозсем лайăх вăрлăх хатĕрленине пула çулсеренех тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Иртнĕ çулта Чемейри «Сеятель», Кивуйри «1-ое мая», «Радио», Турклари «Электросвет» тата ытти колхозсем кашни гектартан 17-шер центнер таран тĕштырă пухса илчĕç. Вĕсем кăçал та çураки валли лайăх кондициллĕ вăрлăхсем хатĕрлесе хучĕç.

Анчах, районĕпе илсен, вăрлăх хатĕрлес ĕç юлса пырать-ха. Лабораторире тĕрĕслеттернĕ хыççăн вăрлăхсен 55 процентĕ çеç кондицие ларни паллă пулнă. 81 колхозран 22 колхозăн пĕр культура тăрăх та кондициллĕ вăрлăх çук. Уйрăмăнах Ичедеркăри «Ядро», Дворикри «Добролет», Испуханри «Самолет», Тукасри «Культура», Хучашри «Красное Хочашево» колхозсенче вăрлăхсем питĕ начар. Колхозсенче вăрлăха иккĕмĕш хут сортласа тасатассине тивĕçлĕ пек йĕркелемен.

Пăрça вăрлăхĕ—24 колхозра, урпа—18 колхозра, кантăр вăрлăхĕ—21 колхозра, çĕрулми—10 колхозра çитмест. Пахча-çимĕç вăрлăхĕсемпе выльăх апачĕ валли акакан культурăсен вăрлăхĕсене туянма чылай колхозсенче улăштармалли фондсем уйăрса хăварнипех лăпланса пурăнаççĕ.

Клевер выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине тăвас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах ăна чылай колхозсем хаклаймаççĕ. «Заря», «Добролет», «Пучах», «Восход» колхозсен клевер вăрлăхĕ нимĕн чухлĕ те çук. Районĕпе 1.300 гектар клевер акмалла пулсан, вăрлăх 850 гектар валли çеç пур. 16 колхозра клевер вăрлăхĕ çитмест. «Красный Октябрь», Максим Горький ячĕпе тăракан, «Красный партизан» колхозсем вăрлăхлăх клевера халĕ те çапса, шĕкĕлчесе пĕтермен.

Колхозсен, пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрленипе пĕрлех, вĕсене яровизацилесе е чӳхесе акма хатĕрленмелле. Ку енĕпе нумай колхозсенче нимĕн те тумаççĕ. Районĕпе 70 яровизатор хатĕрлемелле пулсан, пăчах та хатĕрлемен. Колхозсем чӳхемелли хатĕрсемпе складсене тата ытти кирлĕ япаласене уйăрса хуман. Вăрлăхсене акма хатĕрлес тĕлĕшпе пиккенерех ĕçлеме вăхăт ĕнтĕ.

Яков СИГАЙ.

Ял Совет исполкомĕ çураки умĕн

ЧУРАЧАК. («Чăваш Коммуни» корр.). Янчуллă ял Советĕнче 7 колхоз. Вĕсенче пуринче те çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать. Вăрлăхсене сортласа тасатнă, тивĕçлĕ кондицие лартнă. Ял Советĕнчи «Венера», «Большевик» колхозсен клевер вăрлăхĕ пулман. Ял Совет исполкомĕ, хăйĕн ларăвĕнче çак ыйтăва сӳтсе-явса, тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Колхозсем клевер вăрлăхне çавăн хыççăнах юнашарти колхозсенчен улăштарса илнĕ.

Çуракине тĕплĕн хатĕрленнĕ май кашни колхозах ĕç планĕсем тунă, вĕсене колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Кашни колхозрах агрокружок ĕçлет.

Ял Совет исполкомĕ çуракине хатĕрленес ĕçе тĕплĕн ертсе пырать. Кирлĕ ыйтусене хăйĕн ларăвĕнче сӳтсе-явса, ĕçри ситменлĕхсене вăл çийĕнчех пĕтерсе пырать. Ял Совет исполкомĕ колхозсенче лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслесе тухнă. Çавăн хыççăн «Новая сила», «Маяк» колхозсенче лашасене начар пăхнине палăртнă. Çак ыйтăва ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче пăхса тухнă. Колхоз председателĕсене, старши конюхсене ĕçе лайăхлатма çирĕп кăтарту панă. Çав кăтартусене мĕнле пурнăçласа пынине те ял Совечĕ тĕрĕслесех тăрать. Начарланнă лашасене халĕ лайăх пăхма тытăннă. Хăмăт е ĕнерчĕк тивсе суранланнă лашасене вăхăтлăха ĕçрен хăтарнă.

«Маяк» колхозра лашасене тыткалас ĕçри обезличкăна пула 4 лаша юрăхсăра тухнă пулнă. Ял Совет исполкомĕ çав çитменлĕхе хăвăрт пĕтерме решени йышăннă. Решение мĕнле пурнăçланине те тĕрĕсленĕ. Халĕ лашасене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтернĕ, юрăхсăра тухнă лашасене сиплесе сыватнă.

Пĕр вăхăтра вăрлăхсене пăхса усрас ĕçе ял Советĕнчи колхозсенче çителĕксĕр йĕркеленĕ пулнă. Амбарсене юр кĕнĕ. Çак ыйтупа ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче «Новая сила» колхоз председателĕн Ф. Семенов юлташăн докладне итлесе, тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Амбарти вăрлăхсене тепĕр хут тасатнă, шăтăк-çурăксене питĕрнĕ.

Вырăнти удобренисене хатĕрлес тĕлĕшпе ял Советĕнчи колхозсем аван ĕçлеççĕ. Кашни колхозрах удобренисене планпа палăртнинчен ытларах хатĕрленĕ.

Янчуллă ял Совечĕ массăпа таччăн çыхăнса ĕçлет. Вăл колхозниксене хăйĕн ĕçне анлăн явăçтарать.

С. ШАДИН.

Алмазов бригадинче

ЕТЕРНЕ. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче Ленин ячĕпе тăракан колхозри Алмазов юлташ ертсе пыракан бригада ытти бригадăсенниччен чылай тухăçлăрах тырпул туса илчĕ. Ку бригадăн кашни гектартан вăтам шутпа 16 центнер тĕштырă тухнă.

Бригада кăçалхи вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕве те активлăн хутшăнчĕ. Вăл çуракине хатĕрленсе çитнĕ те ĕнтĕ. Кирлĕ чухлĕ вăрлăх сортласа амбара хывнă, плугсемпе сӳресене, кӳлмелли хатĕрсене çителĕклĕ чухлĕ юсаса хатĕрленĕ. Бригада хăйĕн çĕрне çемçетме планпа пăхнă чухлĕ удобренисем пухса çитернĕ. Колхозниксен плана тултарнипех лăпланса ларас кăмăл çук, вĕсем вырăнти удобренисене татах та ытларах пухма тăрăшаççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмăнах 70 çулхи И. Черновпа Ф. Федоров старикĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем урапасемпе сӳресене, кӳлмелли хатĕрсене çĕнĕрен тăваççĕ, кивvисене юсаççĕ. Çак старикĕсем çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра кăна 70—80-шар ĕçкунĕ тунă. Çавăн пекех П. Александровăпа Ю. Алексеева колхозницăсем те çуракине хатĕрленес ĕçе хастарлăн хутшăнаççĕ.

Ака ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тата кĕске вăхăтра туса ирттерессн турттăм вăйĕнчен нумай килнине шута илсе, Алмазов бригадир лашасене пăхас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Унăн бригадинчи конюхсем—Отечественнăй вăрçă инваличĕ Е. Кириллов тата И. Лукин юлташсем лашасене питех те юратса пăхаççĕ. Вĕсен хальхи вăхăтра начар лашасем çук.

— Кăçал пирĕн пĕр ĕмĕт—гектартан 100 пăтран кая мар тырпул туса илесси. Çак ĕмĕте эпир пурнăçлатпăрах,—тет П. Алмазов юлташ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Вăкăрсемпе хире тислĕк кăлараççĕ

КАНАШ. «3-я пятилетка» колхозра хире тислĕк кăларас ĕçре вăкăрсемпе аван усă кураççĕ. Иртнĕ кунсенче вĕсемпе хире 500 лав фекали турттарса кăларнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах М. Макарова, В. Давыдова, А. Федорова колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

И. МАКСИМОВ.

Комсомолăн районри конференцийĕсем

МУРКАШ, мартăн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче кунта ВЛКСМ райкомĕн II-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире комсомол райкомĕн юлашки 11 уйăх хушшинчи ĕçĕсем çинчен Ф. Артемьева юлташ отчетлă доклад туса пачĕ.

Докладчик районри комсомолецсем ял хуçалăх ĕçĕсене мĕнле хутшăнса ĕçлени тата комсомол организацийĕсем фронта пулăшас тĕлĕшпе мĕн туни çинчен каласа пачĕ.

Анчах та ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пур-ха. Колхоз çамрăкĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Комсомол организацийĕсенче уçă пухусем ирттерин, унта çамрăксене чĕнсе вĕсене интереслентерекен ыйтусене сӳтсе-явни çук. Çавна пула комсомол организацийĕ çителĕксĕр ӳсет. «Знамя труда» колхоз çуммĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕнче 11 уйăх хушшинче пĕр çамрăка та комсомол ретне явăçтарман.

Отчетлă доклад тăрăх прение 13 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем комсомол райкомĕ çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă тата çарпа физкультура ĕçне çителĕксĕр туса пынине, шкулсем енĕпе ĕçлекен комисси питех те начар ĕçленине палăртрĕç. Районра колхоз çамрăкĕсен каçхи шкулĕнче вĕренес текенсем сахал мар. Анчах ВЛКСМ райкомĕ каçхи шкулсем уçман.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ комсомолăн шкулсенчи ĕçне вăйлатмалли мерăсем çинчен йышăннă постановленине пурнăçлассишĕн кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Шурчари, Пашалукассинчи çичĕ çул вĕренмелли тата Орининăри вăтам шкулсенчи комсомол организацийĕсем вĕренӳ пахалăхне хăпартассишĕн, дисциплинăна лайăхлатассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Çавнашкалах ВЛКСМ райкомĕ шкулсенчи пионер организацийĕсене те куллен пулăшса пымасть. Çул çитнĕ пионерсене комсомола кĕме хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

ВЛКСМ райкомĕ комсомола илес ĕçре устава пăсни те пулать. Иртнĕ çулхи август уйăхĕнче хăшĕр çамрăксене рекомендацисем тăратмасăрах комсомола илнĕ. Нумай чухне комсомола илме ыйтса панă заявленисене 3—4 уйăх хушши пăхса тухмасăр вырттараççĕ. «Самолет» колхозри Ертуков комсомолецăн заявленине, виçĕ уйăх иртнĕ пулин те, паян кун та пăхса тухман.

Конференци комсомол организацийĕсем çитес çуракине начар хатĕрленнине палăртрĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен звенисене туман, агротехникăна вĕренессине пур колхозсенче те йĕркелемен. Комсомолецсем агитмассăллă ĕçе сахал хутшăнаççĕ.

Конференци, комсомолăн районри организацийĕ умĕнче тăракан задачăсене тĕплĕн палăртса, анлă решени йышăнса хăварчĕ. ВЛКСМ райкомĕн çĕнĕ составне суйларĕ.

ВЛКСМ райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме пленум Ф. Артемьева юлташа тата иккĕмĕш секретарĕ пулса ĕçлеме М. Горшков юлташа суйларĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

* * *

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Çак кунсенче комсомолăн районри XIII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Мурзина юлташ ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕсем çинчен отчетлă доклад туса пачĕ.

Докладчик Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем тĕрекленсе пынине палăртрĕ. 3 çул хушшинче пурĕ 767 çамрăка комсомол ретне илнĕ. 71 комсомолеца парти ретне панă. Фронта пулăшас тĕлĕшпе нумай комсомолецсем колхозра пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшне ответлă ĕçсенче курма пулать. Сăмахран, уйхир ĕçĕн бригадирĕсем пулса 16 комсомолец, звеноводсем пулса 26 комсомолец ĕçлеççĕ. Комсомолец-трактористсем Магаськинпа Александров юлташсем РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокне илнĕ.

Комсомол райкомĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. 29 организацире 1944 çулта пĕр çамрăка та комсомол ретне явăçтарман. 5 организаци саланса кайнă, 9 колхозра халĕ те комсомол организацийĕсем çук. Райкомол комсомолецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Политкружоксем организацилемен. ВЛКСМ организацийĕсен секретарĕсем тата уйрăм комсомолецсем ку тĕлĕшпе хăйсем те тăрăшмаççĕ. Пурĕ те икĕ секретарь тата 13 комсомолец çеç политшкула вĕренме çӳреççĕ.

Пренире 15 çын тухса каларĕç. Вĕсем пуçламĕш организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене, çав çитменлĕхсем ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем вырăнсене сахал тухса çӳренинчен килнине палăртрĕç. Çакăнпа пĕрлех вĕсем ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç.

Конференцире Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров, ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ Петрухин, ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем Захаровпа Степанов юлташсем пулчĕç.

Конференци ВЛКСМ райком пленумĕн членĕсене суйларĕ. Пленумăн организацилĕ ларăвĕнче ВЛКСМ райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме П. Тихонов, 2-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме А. Романов юлташсене суйларĕç.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ МАЙН ÇИНЧИ ФРАНКФУРТ ХУЛИ ХĔРРИНЕ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Руртан çурçĕртерехре Рейн шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнчи хăйсен укреплениие ăнăçлăн сарса пыраççĕ. Пĕлтерӳре каланă тăрăх, союзниксем 6 пункт йышăннă, вĕсем хушшинче Динслакен та пур. Союзниксен укрепленийĕн тăршĕ халь 40 километра, урлăшĕ 11 километра çитет. Ремаген патĕнчи укреплени районĕнче союзниксен çарĕсем 10 хулапа ял ытла йышăннă.

Кобленцпа Боппард хушшинчи районта союзниксем тата темиçе тĕлте Рейн шывĕ урлă каçса кайнă. Пехота Рейн урлă десант суднисемпе каçнă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăрса çапăçнă, союзниксене питĕ вăйлăн персе тăнă.

Союзниксен чăçĕсем Майнцпа Вормс хушшинчи районта 42 километр малалла куçнине тата Майн шывĕ урлă хывнă кĕпере, нимĕн сиенленменскере, тытса илни çинчен калакан хыпара штаб пĕлтерĕвĕнче тепĕр хут çирĕплетсе панă.

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радион корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 3-мĕш армийĕн чăçĕсем Майн çинчи Франкфурт хулин хĕррине пырса çитнĕ.

БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Берлин çине бомбăсем пăрахнă. Ку ĕнтĕ Германи столицине çĕрле 34-мĕш хут вĕçĕмсĕр тапăнни пулать.

РУМЫНИРЕ ЖУРНАЛИСТСЕНЕ ТАСАТНИ

БУХАРЕСТ, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, журналистсене тасатма тунă комисси ĕçлеме пуçланă. Çакăн пек журналистсене тасатмалла: фашизмпа гитлеризм майлă ĕçленисене, Румыни халăхĕн интересĕсене хирĕç кĕрешнисене, тĕнĕл держависен представителĕсенчен çав державăсем майлă пропаганда тунăшăн укçа-тенкĕ илнисене, Румыние тĕнĕл держависем çумне хутшăнма тата пĕрлешӳллĕ нацисене хирĕç пыракан вăрçа хутшăнма чĕнсе çырнисене, демократие хирĕç пыракан шухăшсем сарнисене, террорла ĕçсем тума, çынсене вĕлерме хĕтĕртнисене тата çавăн пек ĕçсем тунисене.

Пропаганда министерстви хушнă тăрăх, фашистсем майлă çырса тăнăшăн провинцири 9 хаçата тата икĕ журнала хупнă, çав шутра — Брашов хулинче тухса тăнă «Авинтул» хаçата (çав хаçатăн редакцийĕнче ĕлĕкрех гитлерла пропаганда материалĕсем тата хĕçпăшал тупнă пулнă) тата Сибиу хулинче Маниу тăванĕ кăларса тăнă «Ромынна поуа» хаçата хупнă.

ЛЛОЙД-ДЖОРДЖ ВИЛНИ

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Англи парламенчĕн чи ватă членĕсенчен пĕри Давид Ллойд-Джордж вилнĕ.

К Е С К Е Н

* Польшăн эмиграцири правительстви Лондонра, Брюссельре тата Парижра кивĕсен укçа илесси çинчен каларать.

* Швецин тинĕс-çар флочĕн командующийĕ Тамм адмирал вырăнтан тухнă.

* Италипе Бельги правительствисем пĕр-пĕрин патне хăйсен ĕçри поверенныйĕсене янă.

* Францири авиаци предприятийĕсем кăçал 2.000 самолет туса кăлармалла.

* Белградра Югослави партизанĕсен кĕрешĕвĕ çинчен калакан кĕнеке тухнă. Кĕнеке авторĕ, халăх ирĕклĕхĕшĕн пынă кĕрешĕве хăй хутшăннăскер, партизансем халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешни çинчен питĕ лайăх каласа парать.

* Осло хули урамĕсенче нимĕçсем васкасах дотсем, çĕр айĕнчи хӳтлĕхсем тăваççĕ, пралуксем караççĕ. Чугун çул çинче диверсисем тунине хирĕç Норвегире заложниксем тытмалли система туса хунă.

* Софири халăх суртĕнче пĕрремĕш хут «Евгений Онегин» ятлă опера лартнă (вырăсла).

* Ерекен чирсемпе кĕрешес ĕçре пулăшма Румыние пынă совет врачĕсен ячĕпе Румынин сывлăх министерствинче йышăну пулса иртнĕ.

* Лионри суд гестапора ĕçленĕ 5 француз çыннине вĕлермелли приговор йышăннă.

* Белград хулинче «Чапаев» ятлă кинофильма пăхса тухнă. Фильма куракан çынсем картина килĕшнипе час-часах тăвăллăн алă çупнă. Кинорежиссер Сергей Васильев кĕске сăмах тухса каланă. Кино куракансем ăна ăшшăн йышăннă.

* Венгрин Вăхăтлăх Правительстви кирек мĕнле чĕлхепе пичетлесе кăларнă пĕтĕм фашистла литературăна пĕтерсе тăкасси çинчен распоряжени кăларнă.

* Загреб хули сывăхĕнче çапăçакан Югослави партизанĕсен ушкăнĕ юлашки 15 кун хушшинче тăшманăн 7 чугун çул эшелонне, 2 броневикне, 2 паровозне тата çар материалĕсемпе автомашинăсем нумай сирпĕнтерсе янă.

* Бухарест хулине совет искусствин мастерĕсен ушкăнĕ пырса çитнĕ. Вăл ушкăна СССР халăх артистки В. Барсова ертсе пырать. Çывăхри кунсенче совет артисчĕсем Румыни столицинче концертсем памалла. (ТАСС).

Фашистла тыткăнран—Тăван çĕршыва!

Союзниксен çарĕсем ирĕке кăларнă совет çыннисен пĕр ушкăнĕ Одессăна çитнĕ

ОДЕССА, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Çак кунсенче Одессăна совет граждансен тата тыткăна лекнĕ совет çыннисен пысăк ушкăнĕ икĕ транспортпа Одессăна çитнĕ. Вĕсене Хĕвеланăç Германире союзниксен çарĕсем ирĕке кăларнă.

Тăван çĕршыв хăйĕн ачисене ăшшăн та савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. Тыткăнран таврăннă çынсене лайăх çуртсене вырнаçтарнă. Хăйсен тăван хулисемпе ялĕсене таврăниччен пурăнакан пунктсенче столовăйсем, клубсем тунă. Пусмăрлăхран çăлăнса тухнă совет çыннисем хăйсен Тăван çĕршывĕнче мĕн-мĕн пулса иртни çинчен, Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен, совет тылĕ мĕнле пурнăçпа пурăнни çинчен нумай ыйтусем параççĕ. Вĕсем хăйсем каласа пани вара—гитлерла çынвĕлерсенсене айăпланакан хаяр акт пулса тăрать.

1941 çулхи кĕркунне Смоленск патĕнче нимĕçсем аманнă красноармеецсен пĕр ушкăнне тыткăна илнĕ. Вĕсене чугун çул пакгаузĕсене питĕрсе лартнă та унта 21 кун усранă. Çав виçĕ эрне хушшинче тыткăнри çынсене пĕр пĕрчĕ çăкăр та паман. Выçăпа аптăраса, 400 çын ытла вилнĕ. Унтан çав çынсене саперла ĕçсем тума хăваласа кайнă. Кая юлаканнисене, халран кайнипе ӳкекеннисене вĕлернĕ, нумайĕшне чĕрĕллех çĕре варса хунă.

Çав асапсене тӳсеймесĕр, тыткăнри çынсен пĕр ушкăнĕ тарма шут тытнă. Стена айĕнче шăтăк чавса, вĕсем тула шуса тухнă, анчах та 20 çынтан виççĕшĕ кăна тарма пултарнă, ыттисене тытнă та персе вĕлернĕ. Нимĕçсем çапах та совет çыннисен çирĕплĕхне хуçайман. Тыткăнра пулнă çынсенчен пĕри çапла каласа кăтартнă: Донбасра аманнă совет офицерне нимĕçсем тыткăна илнĕ пулнă. Çав офицер штабра ĕçленине нимĕçсем таçтан пĕлнĕ. Хăй мĕн пĕлнине каласа парас пулсан, ăна нимĕçсем нумай укçа тата нимĕçсен офицер чинне пама пулнă. Хĕрлĕ Çарăн офицерĕ тăшман ыйтнине йĕрĕнсе сирсе янă. Вара гитлеровецсем хăйсене кирлĕ сведенисене офицертан асаплантарса илме шут тытнă. Офицера урлă каштаран пуçне аялалла туса çакнă, çӳçĕсене тăпăлтара-тăпăлтара кăларнă, хĕртнĕ тимĕрпе çунтарнă, шартлама сивĕре пăрлă шывпа сапнă, чĕрнисене хĕскĕчпе туртса кăларнă. Асапланса пĕтнĕскере, юн юхтараскере, ăна вара барака пăрахнă, ирхине татах асаплантарма шутланă. Çĕрле совет офицерĕ хăйĕн юн тымарне татнă та вилнĕ. Вилес умĕн вăл хăйĕн юнĕпе çакăн пек сăмахсем çырса хунă: эпĕ хамăн тăван çĕршыва сутмарăм. нимĕçсем манран нимĕн те пĕлеймерĕç. Сывă пулăр. юлташсем! Кам чĕрĕ юлать—тăшмана тавăрăр!

Хăйсен тăван çĕршывне каялла килнĕ çынсем хушшинче çамрăк арçынсемпе хĕрсем нумай, вĕсене нимĕçсем каторгăлла ĕçе ирĕксĕр хăваласа кайнă. Акă çав пусмăра лекнĕ çынсенчен пĕри. Черниговщинăри Прилуки хулинче гестаповецсем ярса тытнă чухне вăл 13 çулта пулнă. 500 совет ачипе пĕрле ăна Бельгие илсе кайнă та шахтăра ĕçлеме хушнă. Лагерьте тĕрмери пек йĕрке пулнă. Кашни 100 метрта прожектор тата пулемет лартнă. Лагерь йĕри-тавра виçĕ рет пралук карса тухнă. Халран кайнă çынсем, паллах ĕнтĕ, хăйсен нормисене тултараймаn; нормăсене тултараймасан—гитлеровецсем çынсене карцера пăрахнă. Карцер вырăнне унта шахтăри пĕр ансăр шăтăкпа усă курнă. Унта ура çинче тăма кăна май пулнă. Шыв чĕркуççи таран пулнă. Гитлеровецсем çав карцера труба кĕртнĕ, труба тăрăх газ пынă. Çавăнта хупнă çын ăнран кайса çĕре ӳксен, ăна уçă сывлăш çине сĕтĕрсе кăларнă, анчах вăл тăна кĕрсенех ăна каллех карцера хупнă.

Советсен тыткăна лекнĕ çыннисем тата нимĕçсем Германие ирĕксĕр хăваласа кайнă мирлĕ граждансем выçăпа тата чирлесе пинĕ-пинĕпе вилнĕ. 1944 çулхи çуркунне совет çыннисен пысăк ушкăнне Çурçĕр Францие укрепленисем тума хăваласа кайнă, унтан вĕсене Кельн патĕнчи лагере ăсатнă. Çав лагерьтен вара вĕсене союзниксен çарĕсем ирĕке кăларнă.

А. ТОРЧИНСКИЙ.

Пахча-çимĕç акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен агрономсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта пахча-çимĕç акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен районри агрономсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу пахча-çимĕç тухăçлăхне ӳстерес тата сад пахчисем ĕрчетсе пăхса çитĕнтерес ĕçе лайăхлатасси çинчен сӳтсе-яврĕ.

Пахча-çимĕçсемпе çĕрулми тухăçне ӳстересси тата çĕрĕç органĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. А. Шорников юлташ доклад туса пачĕ. Канашлу çавăн пекех çĕрулми тухăçне ӳстермелли майсем çинчен Л. Пельцих профессорăн докладне, ир çитĕнекен пахча-çимĕçсене акса тăвасси çинчен А. Кузнецова агрономăн докладне, республикăри колхозсенче сад-пахчисем ĕрчетес тата çуркунне çырла-çимĕç йывăççисем лартас ĕçри агротехника çинчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн пахча-çимĕç Управлени начальникĕн Р. Осанов юлташăн докладне итлерĕ.

Докладсем хыççăн тухса калаçакансем нумай пулчĕç. РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн пахча-çимĕç Управленийĕн начальникĕ И. В. Белохонов юлташ хăйĕн сăмахĕнче колхозниксемпе рабочисен тата служащисен кил вырăнĕсенче улмуççисемпе çырла-çимĕç йывăççисем лартас ĕçе вăйлăлатма кирли çинчен чарăнса тăчĕ.

Ун хыççăн Березина (Сĕнтĕр), Чернова (Элĕк), Коновалов (Йĕпреç), Семякина (Ишлей), Абакумова (Канаш) тата ытти агрономсем те тухса калаçрĕç. Канашлу 5 кун хушши пычĕ. Канашлура пулнисем пахча-çимĕç акса тăвас тĕлĕшпе социализмлă обязательство йышăнчĕç.

Ялсенчи художествăллă пултарулăх смотрĕн итогĕсем

Ялсенчи художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕн итогĕсене пăхса тухса пĕтĕçтернĕ. Смотра пĕтĕмпе 13 районран 350 çын хутшăннă пулнă.

Комисси икĕ коллектива — Ивановăри «1905 год» колхозăн (Çĕрпӳ районĕ) тата Чупайри «Дружба» колхозăн (Вăрмар районĕ) хорĕсене пĕрремĕш премисем парса палăртнă. Вĕсенчен пĕри—«1905 год» колхозри хор республикăри чи ватă коллектив пулса тăрать, иккĕмĕшне вара нумаях пулмасть организациленĕ. Анчах вĕсем иккĕшĕ те хăйсен пысăк пултарулăхне кăтартса панă. Вĕсене лайăх енчен палăртнипе пĕрлех комисси вĕсене хăйсен репертуарне совет юррисемпе (Чупай хорне) тата вырăс композиторĕ Захаров çырнă юрăсемпе (Иваново хорне) пуянлатма сĕннĕ.

Тăватă коллектива — Майоровсен çемьинчен тăракан струнлă оркестра (Куславкка районĕ), Мăн Пикшик колхозĕн хорне (Канаш районĕ), Ишлей районĕнчи Соцкультура çурчĕн хорне, Куславкка районĕн хорне иккĕмĕш премисем памалла тунă. Тепĕр тăватă коллектива виççĕмĕш премисем панă.

Комисси художествăллă пултарулăх коллективĕсен çак руководителĕсене премисем панă: пĕрремĕш премисем—И. И. Иванова (Иванăво колхозĕн хорĕ) тата В. П. Воробьева (Чупай колхозĕн хорĕ); иккĕмĕш премисем—Майорова (струнлă инструментсен ансамблĕ), Петрова (Ишлей районĕнчи струнлă инструментсен ансамблĕ), Васильевăна (Мăн Пикшик колхозĕн хорĕ) тата Черкасовăна (хăлхасăрсен шкулĕнчи пултарулăх ĕçĕн руководительне). Художествăллă пултарулăх коллективĕсен 5 руководительне виççĕмĕш премисем панă.

Художествăллă пултарулăх смотрне хутшăннă çынсенчен çак юлташсене премисем панă: пĕрремĕш премисем—Горохова учительницăна (Канаш районĕ) хăй çырнă «Черные дни» ятлă пьесăна смотрта лартса панăшăн, иккĕмĕш премисем—Дубровăна (Ишлей районĕ) хăй çырнă «Урине» ятлă калава вуласа панăшăн, Федотовăна (Куславкка районĕ) илемлĕ вуласа панăшăн, Кречнера (Çĕмĕрле районĕ) смотрта лартнă пьесăсенчи рольсене лайăх выляса панăшăн, Рубцовăна (Çĕмĕрле районĕ) илемлĕ вуласа панăшăн, Ильина (Çĕмĕрле районĕ) хăй çырнă юрăсене юрласа панăшăн, Кислицынăна (Çĕрпӳ районĕ) юрласа тата ташласа панăшăн. Виççĕмĕш премисем 6 çынна панă.

Пĕрремĕш тата иккĕмĕш премисемпе наградăланисене смотра организацилесе ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Российăри Комитетăн грамотисене панă.

Смотрта лайăх паллăсем илнĕ коллективсемпе уйрăм çынсене виççĕмĕш премисем илнисене, çавăн пекех тата республикăри смотра килмен ытти лайăх коллективсене те (смотр комиссине тăратнă материалсем тăрăх) республикăри смотр Комиссийĕн грамотисене панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕ Хусанти сасăлă кино механикĕсен курсне вĕренме ярать. Курсра 4 уйăх вĕренмелле. Вĕрентме апрелĕн 5-мĕшĕнче пуçлаççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Звуковой кинотеатр, отдел кадров управления кинофикации.
3—2

Шупашкарти эрех заводне çакăн пек работниксем кирлĕ: тонна çурă тиекен грузовик шоферĕ, нефть двигателĕпе ĕçлекен буксир катерĕн мотористĕ, тимĕрçĕ, охранниксем. Пурне те столовăйра апатлантараççĕ, пĕччен пурăнаканнисене общежитие вырнаçтараççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская, 65, Ликеро-водочный завод.
2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн 5—31. издательство конторин — 0—23.

НТ 00553 Типография № Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000